Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 53 (4622) *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 13-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

# Асран тухми çулсем

## Майăн 9-мĕшĕнче Нурлатра Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 53 çул çитнине халалланă уяв иртрĕ



Мĕншĕн эпир май уйăхне çав тери кăмăллатпăр-ха. Тен, сенкер тӳпешĕн, тирексен симĕс тĕсĕшĕн тата сирень, çĕмĕрт, улмуççисем папка çурса, тутлă шăршипе килентернишĕн. Тата уйăхăн тăххăрмĕш кунĕшĕн, шăп çав кун Историн пĕлтерĕшне тарăнран та тарăнрах ăнланатăн, каллех аса килеççĕ пĕр полкри туссен ячĕсем, çарти эпизодсем, фронтран янă çырусем тата хаклă çывăх çынсен сăнарĕсем... Мăнаçлăх тата савăнăç, чун ыратăвĕ тата салхулăх - çак туйăмсем пăшăрхантараççĕ Тăван çĕршыва хăйсен пурнăçне панă ентешсене пуç тайма пынисенчен кашнине.

Май уйăхĕнчи çутă та таса тĕспе пĕрле çав вăхăтра яланах тепĕр тĕс пур. Хуйхăллă та хурлăхлă. Фронтра вилнĕ салтак арăмĕшĕн Клавдия Федоровна Атаковашăн шăп çав хура тĕс ĕмĕрлĕхе тĕп тĕс пулса тăнă. Акă 50 çул ытла ĕнтĕ вăл кирек мĕнле уявра та хура тутăр çыхать: мĕнле-ха урăхла? Унăн мăшăрĕ, Алексей Иванович Буранов разведчик, 43-мĕш çулхи декабрь уйăхĕнче, шăп çĕнĕ çул умĕн... Вăрçă вăхăтĕнче кĕлте çыхнă е уй-хирте тракторпа ĕçленĕ хĕрарăм чечеке ларма тытăннă турата Ĕмĕр сӳнми вут умне хурсан, ун çумне вара чечек кăшăлĕсем тата тюльпан çыххисем хушăнсан, Çĕнтерӳ кунĕн уяв программин уйрăмлăхĕсене пăхмасăр, çак самантсем питĕ хумхантараççĕ, чуна пырса тивеççĕ.

Кăçалхи уяв ирхине 9 сехетрех пуçланчĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, кăкăрĕсем çине медальсемпе орденсем çакса тата районпа хула ертӳçисем вилнĕ ентешсене халалласа лартнă палăк умне ачасен чечексемпе тата шарсемпе илемлетнĕ кридорĕпе утрĕç. Халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Нурлат Совечĕн председателĕ, районпа хула администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин уявăн официаллă пайне ăшшăн та чунчĕререн саламласа уçрĕ, танк айĕнче выртса юлнисем, юханшывсем урле пульăсем витĕр çапăçса каçнисем, окопсенче шăннисем тата Аслă Çĕнтерĕве çывхартас тесе тылра ырми-канми вăй хунисем умĕнче чĕррисем ĕмĕр-ĕмĕр парăмра пулни çинчен аса илтерчĕ. Митингра çаплах районти çар комиссарĕ Ф.А.Садреев подполковник, тăватă хут орденоносец, тупăпăшалтан персе тăракан взводăн оруди командирĕ пулнă П.И.Ильин, Афганистанти тата Чечняри çар ĕçĕсене хутшăннисем, Хĕрлĕ Çăлтăр Орденĕн кавалерĕ Ю.Г.Юдановпа А.З.Хусаинов тата çара каякан И.Рыбаков тухса калаçрĕç. Йăлана кĕнĕ тăрăх пĕр минут шăп тăчĕç, вăл вара Ĕмĕр сӳнми вут умне пуçтарăннă халăха тата ракетницăсенчен панă уяв салютне пĕтĕçтерчĕ.



Кайран площадь сцена площадкине çаврăнчĕ, унта хулари шкулсен вăйĕпе вăрçă сăнарлакан "Тăван çĕршыв-анне чĕнет", "Канма чарăнсан", "Ирĕке кăларакан салтака халалланă палăк" тата "Çĕнтерӳ кунĕ" эпизодсене кăтартрĕç. Çамрăк ташăçăсен хореографи композицийĕ хыççăн уявăн илĕртӳллĕ пайĕ пуçланчĕ. Çав вăхăтра вăл Нурлатри тĕп площаде куçнăччĕ ĕнтĕ. Кунта ĕлĕкхи çулсене аса илсе, вĕрсе каламалли инструментсен оркестрĕ "Прощание славянки" кĕвви янăрарĕ, баян кĕвви майăн çар тумĕ тăхăннă яшсемпе хĕрсем вальс ташларĕç, çынсем асăнмалăх сăн ӳкерттерчĕç, суту-илӳсен пуян çӳлĕкĕсенчен тавар туянчĕç, эстрадăн уçă сцени çинче художество пултарулăх артисчĕсем куракансене хăйсен юррисемпе тата ташшисемпе савăнтарчĕç. Сивĕ çил вĕрнине пăхмасăр çынсем хăйсене ăшă та кăмăллă, савăнăçлă туйрĕç. "Фронтри" 100 грамм та питĕ вырăнлă пулчĕ - походри палаткăсенче, фронтовиксем валли сĕтел хатĕрленĕччĕ, хир кухни тĕтĕм кăларчĕ, унта пиçекен пăтăн тутлă шăрши сарăлчĕ.



Т.НАЗАРОВА.

## Кама леш енчи районсенче пулса

Кăçалхи майăн 7-мĕшĕнче Тутарстан Республикин Премьер-министрĕ **Ф.Х.Мухаметшин** тата ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç Министрĕ **В.П.Васильев** хирти çурхи ĕçсемпе паллашас тĕллевпе Кама леш енчи районсенче пулчĕç, çав шутра пирĕн районăн хирĕсенче те. Хаклă хăнасене Аксу районĕн чиккинче хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ **Ф.С.Сибагатуллин** ертсе пынипе делегаци кĕтсе илчĕ. Пирĕн район хирĕсене кăтартнă май, вĕсем хăнасене Элкел район чиккине çитиччен ăсатрĕç. Ф.Х.Мухаметшинпа В.П.Васильев ака мĕнле пынипе кăмăллă пулнине пĕлтерсе, çĕр ĕçченĕсене акана кĕске вăхăтра та пысăк пахалăхпа пурнăçлама ăнăçлăхсем сунчĕç.

## Тырпул çитĕнессе çĕр ĕçченĕ шанать

*"Тухăç-98" пресс-центр пĕлтерет*

Çуркунне çапла йывăррăн, кăткăс хуçаланма тытăннине опытлă çĕр ĕçченĕсем те астумаççĕ. Çавăнпа та механизаторсен чăтăмлăхĕ тĕлĕнтерет: пысăк тертпе пулин те, çапах та пуçламăш агромероприятисене, кĕрхи культурăсен çуркаланса пĕтнĕ анисене хушса акассине ăнăçлă ирттерме пултарнă. Çурхи культурăсене акма уйăрнă вăхăт çывхарнăçемĕн çывхарать, çавăнпа та вĕсене чи кĕске сроксенче ирттерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн çĕр ĕçченĕсем шăп кăна çак требованисене шута илсе, вăйĕсене, вăхăчĕсене шеллемесĕр, кану çинчен манса вăй хураççĕ. Чылай лаптăксем çине акнă хуçалăхсем пурри те пире питĕ савăнтарать. Сăмахран, "Кондурча", "Заря" хуçалăхсенче çурхи тулла акса пĕтернĕ, Мичурин ячĕпе хисепленекен, Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциацисенче, нумаях пулмасть пĕрлештернĕ "Татарстан" тата "Элмет" хуçалăхра тырăлăх пăрçана, "Алга", "Комбайн", Синдряков ячĕпе хисепленекен тата ытти хăшпĕр хуçалăхсенче урпа, ака умĕн кăна пĕрлештернĕ "Рассвет", "Çуткӳл", "Урняк" хуçалăхсенче, сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче тата хăшпĕр хуçалăхсенче çурхи тулă акма палăртнă лаптăксен çуррине ытла акнă ĕнтĕ.

Ытти агрокультурăсене акаççĕ. Хресченсен хуçалăхĕсен "Киклĕ" ассоциацийĕнче, сахăр заводĕн хушма хуçалăхĕнче сахăр кăшманне акма тытăннă, иртнĕ çул та вĕсем çак культурăна акса ӳстерессинче палăрнă. Çанталăк уяртнипе хирте ĕçлекенсен кăмăлĕ те çĕкленӳллĕ, çĕр хăвăрт ĕлкĕрет, çакă вара акана кĕске вăхăтра вĕçлеме май парĕ.

## Хирти çĕнĕ паттăрсем

1

Çĕр ĕçченĕсене çанталăк иртĕхтерместь, нормăна пурнăçлани те механизаторсемшĕн пысăк савăнăç. Апла пулин те, кашни хуçалăхăн тенĕ пекех хăйĕн паттăрĕсем пур. Çапла, "Рассвет" ассоциацири **Салимзян Хакимзянович Шарипов** ДТ-75 агрегатпа кунне 50 гектар çине тырă акса, смена нормине 227 процент пурнăçланă.

* * *

Çав ассоциацири **Владимир Михайлович Кузьминпа** Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхри **Владимир Дмитриевич Иванов** çурхи культурăсене акнă çĕрте нормăна кунсерен пĕрре суршар пурнăçлаççĕ.

* * *

Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен хуçалăхри **Минтагир Гараевич Абдулвалеев** та çурхи культурăсене акнă çĕрте икĕ нормăна яхăн пурнăçлама пултарнă (196 процент). Унăн ĕçри юлташĕ **Камиль Хасыбуллович Салахов** 45 гектар çинчи тăпрана культивацилесе, нормăна 173 процент тултарнă.

## Ветерансене - "Ватаным Татарстан"

Майăн 9-мĕшĕ - Çĕнтерӳ кунĕ умĕн хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕн решенийĕпе вăрçăн районти 360 ветеранне 1998 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче "Ватаным Татарстан" хаçата тӳлевсĕр илсе тăма квитанцисем пачĕç. Ветерансем вара çакăн пек парнепе кăмăллă пулчĕç пулĕ тесе шутлатпăр.

## Ăшшăн саламлатпăр

***Тутарстан Республикин Президенчĕн Указĕпе Нурлат районĕпе Нурлат хула администрацийĕн аппарачĕн ертӳçи пулса ĕçленĕ Фатых Миниханович ГАЛИМОВА Тутарстан Республикин Хисеп грамотипе наградăланă.***

# Салтак арăмĕ

Манăн мăнакка, аннепе пĕртăван Прасковья Николаевна Алмазова пур. Вăл Уксăмлăра пурăнать. Мăнакка нимĕнле паттăрла ĕç туман, колхозра ĕçлесе пурăннă пулин те, манăн ун çинчен каласа парас килет. Халь вăл 86 çулта, хăйне тӳрĕ тытать-ха, тирпейлĕ тăхăнать, хăйне валли хăй çĕлет.

Час-часах эпир телей хамăртан килет тетпĕр. Анчах та ку яланах апла мар çав...

Вăрçăччен ку çамрăк çемьен икĕ ача пулнă, виççĕмĕшне кĕтнĕ. Упăшки, Захар Петрович Алмазов, пурнăçа юратакан, тăрăшуллă кил хуçи пулнă, мăшăрне те питĕ юратнă. Çакна пурне те вăрçă кансĕрленĕ. Захар Петрович вăрçăра вилнĕ. Вĕсен хĕрача çуралнă, Зоя ят панă, анчах та ăна ашшĕне курма шăпи пӳрмен. Пурнăç иртĕхтермен. Ачисем, хуçалăх, колхоз ĕçĕ. Анчах та пысăк хуйхă пулсан питĕ йывăр çав. Кĕçĕн хĕрĕ ача çуратас умĕн вилсе кайнă. Аслă хĕрĕ инвалид - аллисем те, урисем те хускалмаççĕ. Кăçал, февраль уйăхĕнче, ывăлĕ Виталий вăхăтсăр вилсе кайрĕ. Хăш-пĕр чухне шăпа ака мĕнле хĕрхенӳсĕр пулать çав...

Çак вата та çинçешке, тăлăха юлнă салтак арăмĕн вăйĕ ăçтан тухни тĕлĕнтерет. Ял çыннисем ăна шелleççĕ кăна мар, вăл тӳрĕ кăмăллă та йĕркеллĕ пулнăшăн, ĕçе юратнăшăн хисеплеççĕ. Ун патĕнче час-часах пулаççĕ, мĕнпе те пулин пулăшма тăрăшаççĕ.

Мăнаккан çемйи пĕчĕккĕ мар. Вĕсем пурте пĕрле пурăнаççĕ: чирлĕ хĕрĕ, мăнукĕпе унăн мăшăрĕ тата вĕсен икĕ ачи. Унăн кинĕсем лайăх, ăна кӳрентермеççĕ, мăнукĕн ачисем те хăйсен асламăшне юратаççĕ.

Влаççем те ун çинчен манмаççĕ. Колхоз хваттер пачĕ. Вăл савăнма тата савăнăçа хаклама пĕлет. Çынсемпе пуринпе те ырă кăмăлпа калаçать. Тăлăха юлнă салтак арăмĕ ăстăн илемлĕхне çапла упраса хăварма пултарнă. Ăна тата Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнĕ салтаксен арăмĕсене пурне те çирĕп сывлăх, тăнăçлă ватлăх сунатăп.

**И.ЕГОРОВА.**
**Бугаиха поселокĕ.**



# "Астăвăм" Кĕнеки

Çак кĕнекене кăларни пирĕн хулан культура пурнăçĕнче паллă событи пулса тăчĕ. Общественность ăна тахçанах чăтăмсăррăн кĕтетчĕ. Çак хурлăхлă список, хура тум тăхăнтартнăскер, ман умра выртать. Кĕнеке калăпăшĕ эпир хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн мĕнле пысăк хак панине кăтартать...

Пăлханса кайса эпĕ Кĕнекене уçатăп. Акă вĕсем, çĕр-çĕр яш куçĕ ман çине тĕллесе пăхать.

...Вĕсене питĕ вăрах кĕтнĕ, вĕсемшĕн амăшĕсем кĕл тунă, çамрăк мăшăрĕсем вара каçхине сивĕ вырăн çинчи минтерсене куççульпе йĕпетнĕ; хыпарсăр çухалнисене сывă юлнисем халĕ те кĕтеççĕ-ха; шанăç чи кайран вилет... Хумханса страницăсене пĕрин хыççăн теприне уçатăп, хам палланисен, юратнă çынсен, юлташсен ячĕсене шыратăп. Вĕсем нумайăн. Акă манăн юлташăн, Петр Васильевич Петровăн хушамачĕ, унăн мăшăрĕ халиччен теха вăл тунă çуртра пурăнать. Акă Толя Кузнецов, Совет Союзĕн Геройĕ, 1937 çулхи хĕлле вăл парнеленĕ сăнӳкерчĕке халиччен упратăп. Чылайăшне эпĕ астăватăп, акă Юрийпе Евгений Наумовсем, Павлуша Козаков, Василипе Анатолий Алемасовсем тата ыттисем. Хăйсен çамрăк пурнăçне Тăван çĕршывшăн хунă паттăрсене ĕмĕрлĕхех асра тытăпăр, ют çĕршыв тăпри вĕсемшĕн çăмăл пултăр...

Вăрçă хăйĕн хăрушă пулăмĕсемпе тивнĕ, Кĕнекене халалланисен çывăх çыннисен ячĕсенчен ăна хатĕрлекенсене тав тăватпăр. Уйрăмах эпĕ вăрçăра вилнĕ пирĕн ентешсем çинчен материалсем пухнă çĕре пысăк тӳпе кĕртнĕ Исаак Львович Сандлера тав тăвасшăн. Ăна пĕлмен çын хулара çук та пулĕ. Эпĕ ăна çур ĕмĕр ытла пĕлетĕп. Çамрăк чухне вăл чугун çул клубĕ çумĕнчи çамрăксен пултарулăх коллективне ăнăçлă ертсе пычĕ, чылай çул хушши драма кружокĕн режиссерĕ пулчĕ, унăн спектаклĕсене курма станци çывăхĕнче пурăнакансем пурте пуçтарăнатчĕç. Каярах Тăван çĕршыва тĕпчесе вĕренекен вырăнти музей йĕркелеме шухăш тытрĕ. Хăйне кирлĕ экспонат шыраса пирĕн районăн хăш кĕтессине кăна çитмен пулĕ вăл! Музей культура çуртĕнче йĕркеленчĕ, вăл питĕ ăнăçлă ĕçлет. Утмăлмĕш çулсенче çĕнĕ шухăшпа: вăрçăра вилнĕ пирĕн ентешсене "Астăвăм" Кĕнекине кăларассипе хĕрсе кайрĕ. Вăрçăра вилнисем çинчен сведенисем пуçтарас ĕç тытăнчĕ. Ăна хулапа ялсенчи шкулсенче вĕренекенсем пулăшрĕç. Çар комиссариачĕн, ял Совечĕсен архивĕсенче нумай вăхăт ирттернĕ, тупнă даннăйсене питĕ тĕплĕн тĕрĕсленĕ, вăрçăра хăйсен çывăх çыннисене çухатнă çемьесенче пулнă. Исаак Львович пуçарăвне вăрçăра вилнисен тăванĕсем мĕн пултарнă таран пулăшма тăрăшрĕç: çемье архивĕсенче кивĕ çырусем, сăнӳкерчĕксем, вилнĕ хутсем тупăннă.

1966 çулта Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнĕ салтаксене халалланă Палăка уçрĕç. Ĕмĕр сӳнми вут çунма тытăнчĕ. Никама та, нихăçан та манмĕç. Çакна çирĕплетсе пысăк щит вырнаçтарчĕç. Унта вăрçăра пуçĕсене хунисен ячĕсене палăртнă. Çак список "Астăвăм" Кĕнекин никĕсĕ пулса тăнă, вăтăр çул иртсен вара вăл çута курчĕ... Анчах та вăрçăра вилнисене шырас тĕлĕшпе кăткăс ĕç халиччен те пырать-ха. 330 фотодокумент пуçтарнă! Уйрăмах çакна палăртмалла: ку ĕçе хăйне усă тăвасшăн пурнăçламан, Исаак Львович уншăн пĕр пус та илмен: хальхи вăхăтра вара çакна шанма йывăр...

Тахçантанпах кĕтекен Кĕнеке тинех çута курчĕ. Хулара пурăнакан çĕр-çĕр çын ăна хумханса уçать, пирĕн Тăван çĕршыв историн хурлăхлă страницисене çĕнĕрен тӳссе ирттерет. Энтузиаст ĕçне тивĕçлĕ хак парасса шанас килет. Хиселлĕ Исаак Львови[illegible] çак Кĕнекешĕн, Сирĕн çакăн пек пархатарлă ĕçĕршĕн тав тăватпăр. Малашне те Эсир, халичченхи пекех, обществăшăн тăрăшса вăй хурасса шанатпăр.

**Василий ПОСЕЛЕННОВ.**
**Нурлат хули.**

Вут-çулăм витĕр тухнисем

# Вăрçă, нуша тата яшлăх

**Вăрçă вĕçленнĕренпе çулсем иртнĕçемĕн ветерансем çав хăрушă вăхăтсене час-часах аса илеççĕ. Вĕсем хăрушă та юнлă вăрçă тата çĕнтерес тесе мĕн чухлĕ çын пуçĕсене хуни çинчен ытларах та ытларах каласа парас теççĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ Насыбулла Аглиуллин уяв умĕн пирĕн пата шăп кăна çавăн пек шухăшпа килчĕ. Кĕскен кăна пирĕнпе калаçакан çинчен: вăл Киклĕ ялĕнче 1923 çулта çуралнă. Фронта 1942 çулта кайнă, вăрçа 1945 çулта Будапештра вĕçленĕ. Вăл "Хăюлăхшăн" медале тивĕç пулнă, унăн ытти çар наградисем те чылай.**

- Мана фронта 1942 çулта илчĕç. Унччен эпир хамăрăн ялти 7-8 çынна лавсемпе Хусана ăсатрăмăр, вĕсем хушшинче манăн юлташ Фатих Хаджимуратов та пурччĕ. Эпир унпа, тен, вăрçăра тĕл пулăпăр-ха тесе питĕ ăшшăн сывпуллашрăмăр.

Мана Глазов хулинчи çар училищине вĕренме ячĕç. Анчах та эпĕ ăна пĕтерейменрĕм: нимĕçсем Сталинграда, Мускава çывхарнăçемĕн çывхарчĕç. Училище салатса, унăн бази çинче икĕ хут Хĕрлĕ ялавлă 57-мĕш бригада йĕркелерĕç те Çурçĕр Кавказа - Моздок хулине ячĕç.

Манăн çар çулĕ çапла пуçланчĕ. Керчь хулине илнĕ хыççăн нимĕçсем пирĕн вăя сисĕнмелле пĕтерчĕç. Кайран вара хĕрлĕ ялавлă 316-мĕш дивизи йĕркелерĕç, унта эпĕ разведчик пулса тăтăм. Çапăçса эпир Киев, Святошино, Бердечево хулисене илсе, Польша çитрĕмĕр. Шăп кăна çакăнта эпир кĕтмен çĕртен Фатихпа тĕл пултăмăр. Ман ентеш те разведчикчĕ. Çавăн чухне эпир пĕр-пĕрне сăмах патăмăр: пиртен пĕринпе мĕн те пулин пулас пулсан, çавăн çинчен тăвансене пĕлтермелле. Фашистсем хăйсен аллине лекнĕ совет разведчикĕсене чĕрĕ хăварманнине эпир пĕлеттĕмĕр.

Пĕррехинче рота командирĕ Басенков юлташ мана коптерка йышăнма приказ пачĕ. Çав каç эпĕ хамăн юлташсен тепĕр ушкăнне разведка ăсатрăм. Вĕсенчен иккĕшĕ кăна каялла таврăнчĕç те тăшмансем пирĕн яшсене питĕ хытă хĕнесе пĕтерни çинчен каласа пачĕç. Салтаксене чееленсе тытса, нимĕçсем взвод командирне Горбачева çакса вĕлернĕ, кайран, выльăх тирне сӳнĕ пек, унăн ӳтне те çĕçĕсемпе таткаласа пĕтернĕ. Салтаксем хăйсен куççульне пытараймарĕç.

Анчах та вăрçă вăрçă ĕнтĕ, нăйкăшса, ачашланса тăма вăхăт çукчĕ, эпир малалла - хĕвелтухăçнелле талпăнтăмăр. Фатихпа эпир çыхăну тытсах тăтăмăр, пĕрле разведкăра та пултăмăр. Пĕррехинче, ирхине черетлĕ заданирен таврăннă чухне, мана ентеш аманни çинчен пĕлтерчĕç. Эпĕ тӳрех Фатих выртакан çĕре васкарăм. Унăн куçне амантнăччĕ, çаплах урине те лектернĕччĕ. Çав кунах ăна госпитале ăсатрĕç, унтан вăл ман пата çыру ячĕ, ăна хăй çырнăччĕ. Кайран Мускавран хăрушă хыпар килчĕ, ăна вăл каласа тăнипе урăх çын çырнă, унăн иккĕмĕш куçĕ те курманни çинчен пĕлтернĕччĕ.

Вăрçă хыççăн та эпир пĕрпĕринпе çыхăнăва татман: тĕл пулатпăр, калаçатпăр. Вăл лайăх çемье хуçи пулса тăчĕ, мăшăрĕпе питĕ лайăх ачасем ӳстерчĕç. Вăл районта хисеплĕ çын. Эпĕ вара ăна халь те çамрăк та хăюллă яш пек астăватăп-ха.

Çулсем иртнĕ май эпĕ хамăн фронтри юлташсене час-часах аса илетĕп. Çак асаилӳсем вăрçа ылхантараççĕ, унта мĕн чухлĕ çамрăкăн пурнăçĕ татăлчĕ вĕт. Çаплах вăрçă хирĕнчен сывă таврăннисене пурне те тав тăвас килет.

Хулапа район прокуратуринче

# Правана тавăрса памалла

1998 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче Нурлатри РОВД ОГАИ начальникĕ ячĕпе сыхлав йĕркипе йышăннă протест водительсен чи йывăр самантне тивет: транспорт хатĕрĕсемпе çӳремелли правана туртса илни, çавăнпа та çакăн çинче тĕплĕнрех чарăнса тăни вырăнлă пулĕ.

Çапла, ОГАИ начальникĕн 1997 çулхи августăн 9-мĕшĕнчи постановленийĕпе Çулпа çӳремелли правилăсене пăснипе авари ларутăрăвĕ сиксе тухнăшăн Тутарстан Республики 1993 çулхи майăн 17-мĕшĕнче "Çулпа çӳремелли правилăсене пăснăшăн администраци енчен явап тыттарасси çинчен..." йышăннă Законĕн 4-мĕш статйипе килĕшӳллĕн Г. гражданинăн транспорт хатĕрĕсемпе çӳремелли правине 36 уйăхлăха туртса илнĕ.

Ку постановлени законпа килĕшсе тăмасть тата çакна тĕпе хурса ăна улăштармалла.

1993 çулхи майăн 17-мĕшĕнчи Законăн 4-мĕш статйин санкцийĕ йĕркене пăсакана 2 уйăхран тытăнса 3 уйăха çити чи пĕчĕк ĕç укçи виçи чухлĕ штраф тӳлеттерме е транспорт хатĕрĕсемпе çӳреме ирĕк паракан документна 3 уйăхран тытăнса 6 уйăха çитиччен туртса илме палăртнă.

РСФСР КоАПăн 33-мĕш статйипе килĕшӳллĕн административлă йĕркене пăснăшăн нормативлă актпа палăртнă нормативсемпе çеç айăплаççĕ.

Çапла майпа, прокурор сĕнет:

- Нурлатри РОВД ОГАИ начальникĕ Г. гражданина транспорт хатĕрĕсемпе çӳреме ирĕк паракан документа 36 уйăхлăха туртса илесси çинчен йышăннă постановленине законăн тивĕçлĕ статйи пăхса хăварнă мерăпа улăштармалла.
- Законпа палăртнă йĕркепе 6 уйăх иртнине шута илсе Г. гражданин правине тавăрса памалла.

## Сывлăх сыхлавĕнче - 30 çул



*Альбина Николаевна Тафеева Чулпанти больницăра ĕçлеме тытăннăранпа кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнче 30 çул çитнĕ. Апла пулсан, вăтăр çул хушши вăл çынсен сывлăхне сыхлать. Чистайри медицина училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн Альбина Николаевна 20 çул хушши акушерка пулса вăй хунă. Çак çулсем хушшинче мĕн чухлĕ ачана çут тĕнче курма пулăшнине шутласа кăларас çук. Альбина Николаевна, малтанхи пекех ырă кăмăллă та тимлĕскер, çав вăхăтрах вăл çĕнĕ специальноçсене те алла илет. Юлашки çулсенче вăл рентгенолог тата регистратор тивĕçĕсене те пурнăçлама тытăннă.*

*А.Н.Тафеева ăслă та ырă кăмăллă пулнипе, чирлисене пĕрремĕш пулăшу вăхăтлă панипе, вĕсемшĕн мĕнпур условисем туса пама тăрăшнипе палăрса тăрать. Шăп кăна çак пахалăхсемшĕн ăна чирлисем те, ĕçтешĕсем те хисеплеççĕ.*

*Ӳкерчĕкре: А.Н.Тафеева.*

## Социаллă страховани фончĕ ачасене сиплеме пулăшать

**Кашни çын çуралса виличченех социаллă страховани фончĕпе çыхăннă. Ача çуралнă хыççăн паракан пособи, Çĕнĕ çул уявне паракан парнесен хакĕн пĕр пайне тӳлени, сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене путевкăсем, вăхăтлăха ĕçлеме пултарайманнипе, хĕрарăмсене йывăрлă чухне, ача çуратнă хыççăн, ача 1,5 çула çитиччен тӳлекен пособисем... Кунсăр пуçне социаллă страховани фончĕ ĕçлекенсене тата вĕсен çемйисене санаторисемпе курортсене сывлăхне сиплеме ярассипе ĕçлет. Çакăн çинчен эпир Нурлат районĕнчи социаллă страховани фончĕн уполномоченнăйĕнчен Валентина Порфирьевна АЛЕКСЕЕВАРАН ыйтса пĕлтĕмĕр.**

- 1997 çулта ку тĕллевпе 861,3 миллион тенкĕ тăкакланă. 159 çын хăйсен сывлăхне сипленĕ, вĕсенчен виççĕшĕ тӳлевсĕр - кусем вĕсем ЧАЭСра тата "Маяк" ПОра радиаци сиенне тӳснисем.

Ачасене 48 путевка панă ("Амăшĕпе ача" евĕрлисем), вĕсенчен йывăр чирлĕ 5 ачана тӳлевсĕр.

ЧАЭСа хутшăннă пĕр çынна санатори путевки вырăнне компенсаци тӳленĕ. Санатори-профилакторисенче сипленме 313 путевка уйăрнă. Сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче пулнă 199 ачан путевкисене тӳлеме 36 миллион тенкĕ тăкакланă тата 8,6 миллион тенкĕ - Çĕнĕ çул парнисем илме.

Путевкăсене чирлĕ çыннăн ĕç вырăнĕнче параççĕ, анчах та предприятин е организацин соцстраха парăмĕсем пулмасан тата норматив тăрăх кăна. 1998 çулта норматив предприяти куçарнă страховани взносĕнчен 15 процент шутланать.

1998 çулта "Васильевский" санаторире час-часах тата нумай вăхăт хушши чирлекен ачасене çулталăк тăршшĕпех сиплессине йĕркеленĕ.

Путевкăсене предприятисемпе организацисен, хресченсен хуçалăхĕсен заявкисем тăрăх парĕç. Çакăн пек ачасен ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ĕç вырăнне заявлени çырмалла, медицина справки тăратмалла. Ку путевкăсене 2-8 классенче вĕренекенсене норматива пăхмасăрах параççĕ, анчах та черетпе. Сиплев срокĕ пĕр уйăх. Вĕреннĕ вăхăтра вĕсене санаторире вĕренӳ программипех вĕрентеççĕ. Март-апрель уйăхĕсенче 5 вĕренекен сипленчĕ ĕнтĕ.

Районта чирлĕ ачасем питĕ нумай, çавăнпа та çакăн пек сиплев питĕ кирлĕ тата усăллă. Ашшĕ-амăшĕ кашни çемйине, хуçалăха пăрахса ачипе сипленме тухса каяймасть вĕт-ха. "Амăшĕпе ача" путевка чылай хаклăрах та, кашни предприяти ăна туянаймасть та.

**Ман виçĕ çулхи ачан ӳчĕ сарăлса кайрĕ. Эпĕ сарамак чирĕ (желтуха) тесе хăраса ӳкрĕм, анчах та анализсем йĕркеллех. Эпĕ ачана пĕрмаях кишĕр çитеретĕп. Çакăн пек сараласси кишĕртен килмест-и?**

**В.ИВАНОВА.**

## Виçене пĕлмелле

Çуркунне витаминсем çителĕксĕр пулнăран амăшĕсем ачисене ытларах кишĕр çитерме тăрăшаççĕ. Чăннипех те кишĕр тĕттĕм çĕрте выртса ылмашăну процесĕсене йĕркелекен ферментсем, минералсем, эфир çăвĕсем тата B,C,A (кишĕре хĕрлĕ тĕс кĕртекен каротин) витаминсем нумай пухать.

Анчах та виçене пĕлес пулать. Ытлашши нумай каротин организмра А витамина куçса ĕлкĕреймесĕр ӳте ларать. Ура тупанне, ал тупанне, кайран пĕтĕм ӳте саратса ярать...

Ку вăл ачан гипервитаминоз пуçланнине пĕлтерет. Малалла та ăна кишĕр çитерес пулсан, ачан апат анми, хăсас килекен пулать. Вăл пĕрмаях ыйхăллă, унăн температура ӳсме, ӳчĕ кушăрхама пултарать. Шатра тапса тухать. Ку кишĕр сĕткенне нумай ĕçтерсен час-часах пулать. Çулталăкчен ачана кунне пĕр апат кашăкĕ сĕткен те çителĕклĕ. Пĕрер тумламран пуçламалла; пĕр çултан пуçласа 3 çулччен - 2,3 апат кашăкĕ, 4-7 çулхи ачасене 1/4 стакан, 8-12 çулта - 1/3, аслă çулхи ачасемпе çитĕннисене - 1/2 стакан/100г/ сĕткен ĕçме юрать.

Ачан ӳчĕ саралнине асăрхарăр пулсан, кишĕрпе ун сĕткенне рационран кăлармалла.

## ОМС - тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕн шанăçĕ

1998 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта ОМС взносĕсем тӳлекен 279 предприятие регистрациленĕ. Медицина страхованине договор туса ĕçлекен 24840 çынна страхланă (халăхăн пĕрлехи шутĕнчен 43,2 процент). 56852 çын медицина страхованийĕн полисне илнĕ, урăхла каласан, пĕрлехи халăх шучĕн 98,9 проценчĕ.

Территорири больница касси 1997 çулта 12,0 миллиард тенкĕ ытла пуçтарнă, вĕсенчен 10,1 миллиард тенкипе сиплев учрежденийĕсенче медицина пулăшăвĕ пама, унта ĕçлекенсене ĕç укçи тӳлеме, эмелсем, сĕтел-пукан, медицина оборудованийĕ, чирлисем валли апат-çимĕç тата çăмăллăхсемпе усă куракансем валли тӳлевсĕр эмелсемпе медицина тĕллевĕпе изделисем туянма усă курнă.

Çак тапхăрта территорири больница касси пирĕн районта тата Тутарстан Республикинче, Раççей Федерацийĕн ытти хулисенче пурăнакансене сиплеме 259,3 миллион тенкĕ тӳленĕ.

Социаллă сферăна ресурссем сахалрах кĕнĕ тата бюджет чухăнланнă май обязательнăй медицина страхованийĕн укçи-тенки районти сиплев учрежденийĕсем халăха медицина енчен пулăшнине финансламалли çирĕп çăлкуç пулса тăчĕ.

ОМС тӳлекенсенчен укçа-тенкĕ йĕркеллĕ килсе тăнипе, пĕрпĕринпе вăхăтлă расчет тунипе районта пурăнакан кашни çын пуçне укçа пухасси ӳсрĕ. Ку вăл территорири больница касси тухăçлă ĕçленин кăтартăвĕ. Çапла, пирĕн районта пурăнакан пĕр çын пуçне 1996 çулта 59,8 пин тенкĕ кĕчĕ, ĕçлекен пĕр çын пуçне - 52,4 пин тенкĕ тата ĕçлемен пĕр çын пуçне 46,5 пин тенкĕ, 1997 çулта вара 202,3, 172,4, 129,0 пин тенкĕ (кивĕ укçапа).

Çапах та районти сывлăх сыхлавне финанслама çакă, тĕпрен илсен, çителĕксĕр-ха. Территорири больница кассине тӳлекенсенчен страхвзноссем вăхăтлă тата пĕтĕмпех килмеççĕ. 1998 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне парăм 26,4 миллиард тенкĕ шутланнă (кивĕ укçапа).

Территорири больница касси пуçтарнă укçа-тенкĕ калăпăшĕ халлĕхе план шайне çитмест-ха, çакă районти сиплев учрежденийĕсене йĕркеллĕ финанслассине япăх витĕм кӳрет. Ĕçлекенсенчен пухăннă ОМСăн пĕрлехи шайĕ 1997 çулта кĕрекен укçа-тенкĕн 32,8 проценчĕ шутланнă. Çакăн пек лару-тăру районти сиплев учрежденийĕсене чирлисене сиплеме йĕркеллĕ финанслама кансĕрлет. Чи пысăк парăма кĕнисен шутĕнче ял хуçалăх предприятийĕсем (хресченсемпе фермерсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсем) - 10,3 миллиард тенкĕ, "Нурлатри сахăр завочĕ" АО - 4,7 миллиард тенкĕ, Нурлатри МСО - 3,9 миллиард тенкĕ, "Агрохимсервис" АООТ - 1,1 миллиард тенкĕ, "Сельхозтехника" АО - 934,5 миллион тенкĕ, АТП - 583,0 миллион тенкĕ, Нурлатри машинăсем тăвакан завод - 457,6 миллион тенкĕ, халăха йăла енчен тивĕçтерекен управлени - 226,5 миллион тенкĕ (кивĕ укçапа).

Предприятисен парăмĕсене чакармалли чи лайăх условисенчен пĕри - çав вăхăтрах 1997 çулта сиплев учрежденийĕсенче апат-çимĕç, медикаментсем, санитари оборудованийĕ, çемçе сĕтел пукан тата ыттине туянма пĕр-пĕрне вăхăтлă тӳленипе тивĕçтерме пулăшрĕ. Çакă предприятисен парăмĕсене чылай чакарма, çаплах сиплев учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатма, районти тĕп больницăн предприятисене памалли парăмсене списать тума пулăшрĕ. 1997 çулта территорири больница кассине тӳлекен предприятисем куçарнă укçан пĕрлехи сумми 2223,9 миллион тенкĕ шутланнă, çав шутра парăмсене парса татни 835,9 миллион тенкĕ, пенисене парса татни 635,1 миллион тенкĕ. Куçарнă укçан пĕрлехи структуринче апат-çимĕçсем - 58,1 процент (1301,4 миллион тенкĕ), çемçе сĕтел-пукан - 3,6 процент (80,6 миллион тенкĕ), медикаментсем - 6,9 процент (154,6 миллион тенкĕ), ытти услугăсем - 31,4 процент (703,3 миллион тенкĕ) шутланнă.

Унсăр пуçне территори больница касси районти финанс пайĕпе ĕçлемен çынсем тĕлĕшпе парăма кĕнине сапланă. Пĕлтĕр çавăн пек майпа 4216,3 миллион тенкĕ куçарнă, ку вăл территори больница кассине кĕнĕ пĕрлехи укçа-тенкĕн 35 проценчĕ шутланать.

Медицина страхованийĕн системине экономикăн йывăр условийĕсенче йĕркеленĕ тата вăл çавăн пек условисенчех ĕçлет, анчах та йĕркелӳ тата финанс йывăрлăхĕсене пăхмасăр, шăп кăна медицина страхованийĕ тата укçа-тенкĕ сиплев учрежденийĕсене медицина пулăшăвĕ парассин калăпăшне тата пахалăхне чакарма май паманнинче пысăк вырăн йышăннă.

Йывăрлăхсем пулнă тата пулаççĕ те. Вĕсене вара маларах тунă ăнăçлăхсене пăсмасăр татса пама тăрăшмалла. Ыйтусене çынсемшĕн йышăннă законсене пурнăçласа кăна татса памалла. Сиплев учрежденийĕсемпе ОМС системинчи ĕçе тĕрĕс палăртмалли, медицина страхованийĕн системинчи ЛПУра вăй хуракансене ĕçшĕн тӳлессине улăштармалли, çав шутра ОМС программипе тӳлевсĕр сиплессине, финанс майĕсемпе килĕшӳллĕн йĕркелемелли вăхăт çитет.

**З.ШАБАЕВ,**
**Нурлатри территори больница кассин ĕç тăвакан директорĕ.**

СПОРТ *** СПОРТ

## *Кĕрешӳ*

Апрелĕн 25-26-мĕшĕсенче Çыранçи Чаллă хулинче çамрăксем хушшинче грекла-римла кĕрешӳпе Тутарстан Республикин чемпионачĕ иртрĕ. Кунта пирĕн Чулпан шкулĕн воспитанникĕсем ăнăçлă кĕрешрĕç. Хăйĕн виçе категорийĕнче Ильгиз Андарзянов (Çыранçă Чаллăри физкультура институчĕн студенчĕ) республика чемпионĕ пулса тăчĕ. 62 килограмлă виçе категорийĕнче Ильнур Насыбуллин (Пĕкĕлмери индустрипе педагогика техникумĕн студенчĕ) иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.



Çаплах Чулпанти вăтам шкулти 10 класра вĕренекен Фаргат Файзуллин та малти виççĕмĕш вырăна тивĕç пулчĕ.

Пирĕн кĕрешӳçĕсене Пĕтĕм Раççейри турнир кĕтет, вăл майăн 15-17-мĕшĕсенче Альметьевск хулинче иртет.

**И.ХАБИБУЛЛИН,**
**тренер.**

## Пуканесем çĕнтерӳ илсе килнĕ

Тутарстан еткерçисен "Тутарстан виççĕмĕш пин çуллăхра" программăпа иртекен "Алĕç тĕлĕнтермĕшĕ" конкурс задачине пуканесене пирĕн халăхăн тĕрлĕ тапхăрсенчи тумĕсене тăхăнтарассине кĕртнĕччĕ. Районта иртнĕ конкурсăн пилĕк ĕçне - хулари 3-мĕш, 4-мĕш номерлĕ, Кульбаево-Марасари, Тĕрнеçри, Тури Нурлатри шкулсен ĕçĕсене республикăри конкурса янă пулнă.

Акă савăнăçлă хыпар килчĕ: пирĕн район малти вырăнсенчен пĕрне йышăннă та Пĕтĕм тĕнчери "Орленок" лагере кайма путевка тивĕç пулнă. Путевка чи лайăх ĕçĕн хуçине - Кульбаево-Марасари вăтам шкулта 8-мĕш класра вĕренекен Люция Мингараева, Фатима Ильская сăнарĕсене хатĕрленĕскере, панă. Хальхи вăхăтра Люция "Орленок" лагерьте канать, унта вăл июнĕн 2-мĕшĕччен пулать. Люцияна унта ачасемпе çамрăксен организацийĕн фестивальне хутшăнма та телей пӳрĕ.

Улах юррисем

## Кĕмĕлех те çĕрĕ - çырулла куç

Ирхине те тăтăм, пасара кайрăм,
Кăрымски çĕлĕк суйларăм.
Кăрымски çĕлĕк, ай, айĕнче
Хура кăтра çӳçĕме ӳстертĕм.
Аттепеле аннен чĕрçи çинче
Ылтăн пек пуçăма ӳстертĕм.

Çӳлĕ кăна çӳлĕ, ай, тусем пур,
Çӳл тусем хушшинче юрсем пур.
Çӳл тусем хушшинчи юрсем çинче
Пăлан пăрушĕсен йĕрĕсем пур.
Аттепеле аннен чĕрçи çинче
Эпир тăпăртатнă йĕрсем пур.

Тур утçăм та юртать, пуçне ухать,
Инçе çула çывăх тăвасшăн.
Аннеçĕм те йĕрет, куçне шăлать,
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурнасшăн.

Уйăхăн та çути çутă пулсан,
Урăрсене урлă ан пусăр.
Уйăхăн та тĕлне пĕлĕт килсен
Пире асăнмасăр ан çӳрĕр.

Кĕмĕлех те çĕрĕ - çырулла куç,
Тăхăнар-ха çырăвĕ пĕтиччен.
Кунтан пĕр уйрăлса, ай, кайсассăн,
Манаймăпăр тепре куриччен.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

## Вĕçкĕн хĕр



Лукарье çитĕнсе çитрĕ ĕнтĕ, качча тухма та вăхăт, анчах никам та качча илмерĕ-ха, калаçтаракан та пулмарĕ. Мĕн тумалла ĕнтĕ? Ирĕксĕр çын патне, Петрун, акă сана кĕçĕр эпĕ качча килтĕм тесе кайса кĕрейместĕн вĕт. Каччă шырама ялтан та тухса каяймастăн, этем - выльăх мар вĕт. Лукарьен ашшĕ-амăшĕсем тĕреклĕ-пуян пурăнатчĕç, пĕртен-пĕр хĕрĕшĕн укçине шеллеместчĕç, чаплă тумлантаратчĕç. Атă-пушмакĕ унăн темиçе мăшăрччĕ, темле тĕслисем те пурчĕ, тутрисен шучĕ те çукчĕ, 80 ытла кĕпе-йĕм арчинче выртатчĕ. Кашни кун урăх кĕпе, урăх тутăр çыхатчĕ. Каçхине вăйăра чăн малтан вăл ташлама тухатчĕ, мĕнле кăна çаврăнкаламастчĕ пуль. Тĕрĕссине каласан, вĕçкĕнлĕхĕ пĕр вагончĕ унăн, урампа утса пынă чух темиçе тĕрлĕ пăркаланса утатчĕ.

Ахăртнех хăйĕн уттипе каччăсене ăнлантарасшăнчĕ пуль. Анчах та пĕр каччă та ун çине ăмсанса пăхмастчĕ. Чĕлхи усалччĕ, эсĕ ăна пĕр сăмах кала-ха, вăл сана çĕр сăмах каласа çĕр тĕпнех антарса яратчĕ. Мĕнле пуян хĕр пулсан та ялта Лукарьепе пĕр каччă та çӳремерĕ, ăна качча илес тесе никам та шухăшламарĕ те. Мĕн, унăн пушмакĕсемпе тата кĕписемпе мар, ырă хĕрарăмпа хăйĕнпе пурăнмалла вĕт. Çамрăксем Лукарье çинчен мĕн шухăшланине калама пултараймастăп, анчах та тĕсĕпуçĕпе вăл хитре хĕр марччĕ. Пĕвĕ пысăкчĕ, тултарнă касмăк пекчĕ, ури хырăмĕсем вут пуленки пекчĕ, кăкри-çурăмĕ кĕпинчен тапса тухасла йăтăнса тăратчĕ, хĕрлĕрех çӳçлĕ, ăна кăтралатнă, тутине хĕретнĕ, пит çăмартийĕсем булка пек хăпарнă, çавăнпа та куçĕсем хĕсĕннĕ, пĕчĕкленсе юлнă, çăварĕ пысăк, кулнă чух пĕтĕм пыр тĕпĕ курăнатчĕ. Çапах та хăйне чаплă хĕр тесе шутлатчĕ.

Çапла, унтанпа нумай çил вĕрчĕ, нумай çумăр çурĕ, вăхăт пĕр чарăнмасăр шурĕ те шурĕ малалла. Лукарье аппа качча каймасăрах ваталчĕ, тăхăрммĕш теçеткере пырать, хĕрлĕ çӳçĕсем те шуралчĕç.

**Николай ВАСИЛЬЕВ.**
**Нурлат хули.**



С.Майстерăн фотоэтючĕ.

## Пĕлтерӳсем

*1989 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108 сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 9, телефон: 2-13-83.*

* * *

*Тасатакан сооруженисем çывăхĕнче гараж сутăнать. 5-24-89 номерлĕ телефонпа 18 сехет хыççăн шăнкăравласа пĕлмелле.*

* * *

*1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21093 сутăнать, сигнализаци, 5 сыпăклă КПП. Телефон: 2-16-11.*

* * *

*1987 çулта туса кăларнă "Рено - Трафик" автомобиль сутăнать, 1,5 тонна тиев турттарма пултарать, дизель. 2-21-75 номерлĕ телефонпа 18 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Сахăр завочĕн микрорайонĕнче 3 пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. 2-17-00 номерлĕ телефонпа 19.00 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*ВАЗ-21013 автомобиль сутăнать. Адрес: Гоголь урамĕ, 15.*

* * *

*Марат Рашидович Фасахов ячĕпе панă водитель удостоверенине тупакана 2-15-15 номерлĕ телефонпа пĕлтерме ыйтатпăр, парне пулать.*

* * *

*Шпалсенчсен тунă 6х3 метрлă çĕнĕ сарай сутăнать. Адрес: Заводская урамĕ, 23-21.*

* * *

*Мотоблок тележки сутăнать. Телефон: 5-22-88.*

* * *

*Пахчаçăсен "Алмалык" юлташлăхĕнче дача сутăнать. Телефон: 5-22-81.*

* * *

*ВАЗ-2109 сутăнать. Телефон: 2-12-54.*

* * *

*Суворов урамĕнчи 41-мĕш номерлĕ çурт сутăнать. Телефон: 2-25-59 (ĕçри).*

* * *

*Кăрмăшра пĕчĕк çемье пурăнмалли хваттер сутăн илетпĕр. Лайăх шайри ВАЗ-2121 тата хула варринчи икĕ пӳлĕмлĕ хваттер васкавлă сутатапăр, тĕрлĕ вариантсем пулма пултараççĕ. ГАИ çывăхĕнчи СТОра. 5-25-35 номерлĕ телефонпа ирхинепе каçхине ыйтса пĕлме пулать.*

* * *

*1995 çулта туса кăларнă, лайăх шайри ВАЗ-21213 "Нива" сутăнать. К.Маркс урамĕнчи 10-мĕш çуртри "Автозапчасти" магазинта ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*ГАЗ-3309 автомашинăпа тиев турттарса паратпăр. Куйбышев урамĕнчи 29-мĕш çуртри 7-мĕш хваттерте е "Альянс" магазинта ыйтса пĕлмелле.*

*Якуркел ялĕнчи кирпĕчрен тунă çĕнĕ çурта сутатпăр е 2 е 3 пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. Газпа хутса ăшăтмалла, 30 сотка участок пур. Телефон: 2-24-13.*

*Бассейн çывăхĕнче нӳхреплĕ дача, пахчаçăсен "Кооператор" юлташлăхĕнче дача, Вырăс Менчинче 12 сотка участок сутатпăр. Телефон: 5-26-04.*

* * *

*Сахăр завочĕн микрорайонĕнче 4 пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. (Çĕнĕ 4 хутлă çуртри 3-мĕш хутра). Адрес: Заводской тăкăрлăкĕ, 11-33.*

"Надежда" ПП çумĕнче (Гиматдинов урамĕ, 79) ритуаллă услугăсен салонĕ уçăлнă. Сутуилӳре:

1. Мусульман тата христиан тĕнĕпе пытармалли мĕнпур кирлĕ япаласем.
2. Мрамор палăксем, чечек лартмаллипе пĕрле - 2 000 тенкĕ.
3. Мрамор тĕпренчĕкĕсенчен тунă палăксем - 465 тенкĕ.
4. Тимĕр картасем - 450 тенкĕ.
5. Чечек кăшăлĕсем, çыххисем.

**Администраци.**

### *М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.*

***Пирĕн патра кăна!***

Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!

Сипленĕ кун, эрнекун, майăн 22, июнĕн 5,19-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 14 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860.